Пенси ыйтăвĕсемпе

# Пĕрлехи социаллă налук вырăнне – страховани взносĕ

Февралĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр ĕç паракансемпе уйрăм предпринимательсен 2010 çулхи январь уйăхĕшĕн пĕрлехи социаллă налук вырăнне Пенси фончĕн, обязательнăй медицина тата социаллă страховани фончĕсен бюджечĕсене страховани взносĕсем тӳлеме тивет.

Обязательнăй пенси страхованийĕпе обязательнăй медицина страхованийĕн страховани взносĕсене тĕрĕс шутласа панине тата тӳленине Пенси фончĕ, социаллă страховани системине пыракан взноссене социаллă страховани фончĕ тĕрĕслесе тăрасçĕ.

Çавăнпа та обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕн страховани взносĕсене 2010 çулхи январь уйăхĕшĕн тупăшсен администраторĕ Раççей Пенси фончĕ пулса тăракан бюджет классификацийĕн кочĕ çине тӳлемелле. Унăн малти висĕ цифри – 392.

Енчен те ĕç паракан страховани взносĕ енĕпе 2009 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне парăм пулнă пулсан, унăн укçатенкĕне Федераллă налук службин администраторĕ пулса тăракан бюджет классификацийĕн кочĕ çине куçарас пулать. Унăн малти висĕ цифри – 182.

(18210202010061000160 – ĕç пенсийĕн страхланă пайне тӳлеме, 18210202020061000160 – ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне тӳлеме). 2010 çулчен страховани взносĕсен администраторĕ Федераллă налук службин пулнă май, 2009 çулшăн страховани взносĕсем енĕпе декларацисене те налук органĕсене тăратма тивет.

Уйрăм предпринимательсен, адвокатсен, нотариуссен тата уйрăм çынсене укçан тӳлесе тăман ытти тӳлекенсен страховани взносĕсене (çирĕплетнĕ суммăсене) 2002–2009 çулсенчи тапхăршăн тупăшсен администраторĕ пулса тăракан РФ Пенси фончĕн бюджет классификацийĕн кочĕсем çине тӳлемелле. Тепĕр майлă каласан, малти висĕ цифри – 392.

(39210910010061000160 – ĕç пенсийĕн страхланă пайне тӳлеме, 39210910020061000160 – ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне тӳлеме).

Бухгалтери службисене ĕçлеме ансатрах пултăр тесе, РФ Пенси фончĕн тата Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн сайчĕ çинче http://www.pfrf.ru/ot chuvash/blank/ çĕнĕ тӳлев докуменчĕсен формисене çырса тултармаллин йĕрки пирки сĕнӳсем вырнаçтарнă. Кирлĕ пур информацие, бланксене тата çĕнĕ отчетлăх формисене страхователе регистрациленĕ вырăнти Пенси фончĕн управленийĕнче те илме пулать.

2010 çулта страховани взносĕсен ставкисем унччен шайрах сыхланса юлаççĕ: 20 процент – РФ Пенси фондне, 2,9 процент – социаллă страховани фондне тата 3,1 процент – обязательнăй медицина страхованийĕн фондне. Страховани взносĕсене расчетлă тапхăртан тытăнса ĕç укçи тата ытти тĕрлĕ тӳлевсен висĕнче кура, 415 пин тенкĕрен иртмесçĕ пулсан, ӳссе пыракан мелпе шутласа параççĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

2010 çулхи халăх çыравĕ

# Хатĕрленӳ ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

2010 çулта çырава хатĕрленессин çĕнĕ тапхăрĕ пуçланчĕ темелле. Чи малтанах халăх çыравне хутшăнакан çынсене суйласа илсе вĕсене вĕрентессине йĕркелес пулать. Вĕсен хăйсен ĕçне йĕркелесе пахалăхлă туса ирттерме пултараслăхне шута илни кирлĕ. Ку вăхăтлăх ĕçе вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсемпе преподавателĕсене, предприятисен, учреждениесен тата общественлă организацисен ĕçченĕсене, ĕçпе тивĕçтерекен центрта регистрациленисене, пенсионерсене, кил хуçи хĕрарăмĕсене явăстарма пулать. Вĕренӳ ĕçне персонал категорине кура пайăн-пайăн туса пымалла.

Çырава хутшăнакансене вĕрентме тата çырав вăхăтĕнче халăх пирки сведенисем пухакан çынсене ĕçлеме усă куракан пӳлĕмсене хуралласине йĕркелемелле, вĕсене транспорт тата çыхăну хатĕрĕсемпе тивĕçтермелле. Ку ĕçе вырăнти самоуправлени органĕсемпе çыхăнса туса пырас пулать.

Çырав кунĕ çитиччен унччен палăртнă ĕçсене мĕнле пурнăçланине усăмлатма тĕрĕслевсем ирттерни те ытлашши мар. Хăйсен полномочийĕсене вырăнти самоуправлени органĕсемпе çырав ирттерессишĕн ответлă пулса тăракан çынсем мĕнле пурнăçланине пĕлме мониторингсем ирттерни кирлĕ. Адрес хуçалăхĕ мĕнле шайра пулнине район администрацийĕн, вырăнсенчи ял тăрăхĕсен специалисчĕсен тĕрĕслесех тăмалла, ун пирки отчетсене кашни уйăхрах патшалăх статистикин вырăнти органне тăратмалла.

Халăх çыравне тивĕçлĕ шайра ирттерессине çынсем хушшинче информаципе ăнлантару ĕçне анлăн сарни пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Ку енĕпе ятарлă план туса хатĕрленĕ.

Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн материалĕсемпе ятарлă стендсем район администрацийĕнче, ял тăрăхĕсенче тата ытти учреждениесенче те вырнаçтарнă. Унти материалсене вара çĕнетсех тăраси пирки манма кирлĕ мар. Информацие ăнлантару ĕçĕн тĕп задачи – общественлă шухăш-ăнлава çирĕплетесси. Граждансем çырав ирттерекенсемпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлеме хатĕр пулчăр.

Çыравччен вăхăт сахалрах та сахалрах. Ăна тĕплĕн хатĕрленсе ирттересси патшалăх статистикин органĕнчен çеç мар, ытти ведомствăсем хăйсен тивĕçне епле пурнăçланинчен те тăчи килет.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Юбилей

# Пурнăçра пуçне усман

Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан Димитрий Сергеевич Голубев çак кунсенче, тĕрĕсрех каласан, ĕнер хăйĕн юбилейне паллă турĕ, 80 çул тултарчĕ. Ялти çамрăкăн вăрçă умĕнхи, вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи пурнăç йĕрки ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман темелле. Муркаш шкулĕнче 6 çул вĕреннĕ хыççăн малалла вĕренме май килмен. Çамрăклах тăван хуçалăхра ĕçе кӳлĕнме тивнĕ. Лашапа суха та тунă, çурлапа тырă вырнă, утă çулса хатĕрленĕ т. ыт. те. 1948 çулта хăйсен «Знамя труда» колхозри тимĕрçĕ лаççинче мăлатук çапакан пулса ĕçлеме тытăннă.

1950 çулта ăна салтака илесçĕ. Шăпах ĕнтĕ вăл çар ретĕнче пулнă тапхăр ял çамрăкĕшĕн нихăçан асран тухми юлнă. Хăйĕн салтак пурнăçне çапла аса илет ĕç ветеранĕ:

– Хĕсмете кайма ят тухсан пире Шупашкара илсе кайса комисси тăратрĕç. Тепĕр такран, 1950 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче, Ишлейри Çар комиссариатĕнчен Канаша илсе çитерчĕç. Унтан вара – Мускава. Чăваш çĕрĕнчен пире иккĕне илсе кайрĕç Мускава. Тепри Турай енчен Михаил Ефремов пулнăччĕ.

Икĕ уйăх хушши учебкăра пулнă хыççăн Турай каччине комиссовать туса каялла киле ăсатрĕç. Мĕншĕнне пĕлместĕп. Мана вара Шалти ĕçсен министерствин çар чаçне Кремле куçарчĕç.

Ун чухне эпĕ ман служба Кремльте иртессе шутлама та пултарайман. Правительствăн, КПСС Тĕп Комитечĕн ун чухнехи ответлă çыннисем иртсе çӳренĕ, кĕрсе тухнă çĕрте постра, хуралта тăраттăмăр. Пĕр енче – рядовой салтак, ăна хирĕç – офицер. Постра тăнă чухне пистолет паратчĕç, тулашĕнче хуралта пулнă чухне – винтовка.



– Сталин та, Бери те, ыттисем те эпир тăракан постсем витĕрех çӳретчĕç. 1953 çулта Сталин вилсе кайсан вара унăн тупăкĕ умĕнче те хуралта тăма тиврĕ. Хамăн салтак тивĕçне Мавзолейра та пурнăçланă эпĕ,– тет вăл.

Халĕ ĕнтĕ эпир уççăнлăх, ирĕклĕх тапхăрĕнче пурăнатпăр. Радио, телевидени, хаçат-журнăл урлă совет саманинче вăрттăнлăх шутланнă тĕрлĕ хыпар-хăнара та пĕлме пултаратпăр. Д.С. Голубевăн вара киле таврăнсан та хăй Кремльте службăра пулни, кама тата мĕн курни-илтни пирки ыттисене каласа пама юраман. Ку информаци патшалăх вăрттăнлăхĕ шутланнă. Çавăнпа та халĕ те унра çак туйăм сыхланса юлнă пулас. Салтакра пулнă вăхăт пирки каласа пама юратмасть вăл.

– Эпĕ тăватă çул хушши хĕсметре пулнă хыççăн тăван яла таврăнсан та чылай вăхăт ялта пĕр çын та эпĕ ăçта службăра пулнине пĕлмен,– аса илет халĕ ватă çын.

Çапла вара 1954 çулта яла таврăнсан ăна хуçалăх ертӳçи Е.А. Андреев сĕннипе улăм валеçекен пулса ĕçлеме фуражира лартасçĕ. 1957 çултан шыв арманĕнче ĕçлеме тытăнать. Кайран вара, 1964 çулта ялта электричествăпа ĕçлекен çĕнĕ арман туса лартсан, ăна кунта арманçăра ĕçлеме шанасçĕ. 2007 çулччен кунта тăрăшать.

– Шел, эпĕ ĕçлеме пăрахсан арман никама та кирлĕ мар пулса юлчĕ, ăна никам та пăхса тăмарĕ, çурчĕ юхăнса пĕтрĕ. Арман çурчĕн çăра уççи вара халĕ те ман килте упранать,– каласа парать Димитрий Сергеевич.

Д.С. Голубев 1957 çулта Зоя Филипповна Скворцовапа пĕрлешсе çемье çавăрнă. Мăшăрĕ те ĕмĕрĕпех тăван хуçалăхра тăрăшнă. Ĕçчен мăшăр 2 ывăлпа 2 хĕр пăхса ӳстернĕ, вĕсем халĕ пурте çемьеллĕ. Ватăсем кĕçĕн ывăлĕпе Николайпа пурăнаççĕ.

Юбиляра 80 çул тултарнă ятпа саламласа ырлăх-сывлăх, çемье ăшши, вăрăм кун-çул суннă пулăттăмăр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: 53 çул алла-аллăн.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»**

## ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ. УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см². Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геолого-съемочные, геолого-разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования либо повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласовываться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу: 429620, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 8-(835) - 30-54-09, 30-54-22.